# *Дунай хумĕсем*

П. ХУСАНКАЯ

1

Тусем канаççĕ тăвăл хыççăн,
Ќанать тусан та çул çинче,
Аманнă йывăçсем çеç выççăн
Пăхаççĕ пĕлĕт куçĕнчен.

Тум хывнă топольсем тăнлаççĕ
Ту айĕнчи Дунай хумне,
Ќăшт çил тухсан çеç асăнаççĕ
Çу кунĕнчи тăпăл тумне.

Ту хушшипе Дунай илемлĕн
Юхать-çке Тухăç еннелле.
Унтах-çке куçăмсем иленнĕ,
Аса илетĕп-шим, элле?..

Эп асăнатăп, асăнатăп:
Инçе-инçе, Ќаçпи енне
Ќăн-кăвак хумлă аслă Атăл
Çĕршывăм çумĕн юхнине.

2

Инçетрен курсассăн — сăрă,
Симĕс — çывăхран пăхсан.
Вăл Дунай ту айĕ тăрăх
Ярăнать иккен юхса.

Шыв хĕрри якатнă чуллă.
Ќăмăл çук çырансенче.
Хулăн хум çеç уçă чунлă:
Пурнăç пур пек хумсенче.

Е вĕсем-и чун пек тарăн,
Чул пек йывăр шухăшне
Такамран вăртса пытарнă
Сивĕ-сивĕ шыв ăшне;

Е вёсем-и вăр таваррăн
Varкăшаççĕ тепĕр чух,
Тăвăлра ытла хастаррăн,
Вăйăра ытла та шух.

Эп куратăп та сăнатăп
Юри çеç Дунай хумне,
Асăнатăп та саватăп
Урăх шывăн юхăмне.

Куç умне тухсах тăраççĕ
Урăх çырлă çырансем...
Атăла асăнтараççĕ
Тарăн шухăшлă хумсем.

3

Хумĕсем ялан асăнтараççĕ
Инçетри çĕршывăма.
Асăнсассăн, илтмĕшех пулаççĕ
Шухăшсем те сăввăма.

Вăхăт çĕршыва тавăрăнмашкăн.
Сывă юл, эппин, Дунай!
Вăхăт, чунăмçăм, ыталамашкăн,
Курнăçса юратуна.

Вăхăт — савнă хулара, тăванăм,
Çĕнĕрен çуртсем лартма;
Вăрçăра пĕр çуннă та, пĕр ваннă
Ялсене капăрлатма;

Вăхăт — ӳстермешкĕн сарă тырă
Хир тулли, куç виçейми;
Кĕрекемĕр пултăрччĕ пит ырă,
Тултăрччĕ ĕçчен пӳлми;

Вăхăт — Атăл хĕррине ансассăн,
Юратса юрра яма;
Вăхăт, ырнă чунăмçăм, хавассăн
Ĕçлеме те выляма...

Асăнсассăн, илтменçи пулаççĕ
Шухăшсем сăввăмсене:
Шухăшсем çаплах çунатланаççĕ
Хĕвелтухăçĕ енне.